Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи
февралĕн 17-мĕшĕнче
тухма пуçланă

2024 çул

Утă (Июль), 12

ЭРНЕКУН

26/10716/№

Хакĕ ирĕклĕ

УТÇИ-2024

## Куллен хушăнать

**Тăвай округĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен-фермер хуçалăхĕсем нумай çул ӳсекен курăксенчен выльăх апачĕ хатĕрлессипе малалла ĕçлеççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне 4580 гектарне (мĕнпур лаптăксен 98 процентне) çулса пухнă. Пĕр вăхăтрах пĕр çул ӳсекен курăксене те 850 гектар çинчен е 72 процентне пухса кĕртнĕ.**

Çапла майпа курăксенчен 5020 тонна (планăн 59 проценчĕ чухлĕ) утă, 15920 тонна (76 процент чухлĕ) сенаж хатĕрлесе хунă. «Акконд-агро фирма» акционерлă общество хăех 9040 тонна сенаж хывнă ку вăхăт тĕлне.

Халĕ унта утă рулонласа хатĕрлеççĕ. Юлашки вăхăтра «Акконд-агро фирмăсăр», Сергей Илларионовпа Валерий Грачев хресчен-фермер хуçалăхĕсемсĕр пуçне ытти чылай хуçалăхра та выльăх-чĕрлĕх валли сенаж хывма тăрăшрĕç.

Вĕсен шутĕнче Дмитрий Алексеев, Вл. Николаев, Оксана Григорьева хресчен-фермер хуçалăхĕсем, «Чутеевский», «Дружба» ял хуçалăх предприятийĕсем тата ытти те. Андрей Моряков, Валерий Грачев, Вл.Николаев ХФХсем, «Дружба» ЯХПК утă чылай янтăларĕç. Тĕслĕхрен, Андрей Моряков хресчен-фермер хуçалăхĕн хайĕн кăна вăл 875 тонна таранах пур ку вăхăт тĕлне.

Хуçалăхсем выльăх апачĕ хатĕрлессипе малалла тимлеççĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**





РЕСПУБЛИКĂРА, ÇĔРШЫВРА

## Уй кунĕ иртет

**Уй кунне кăçалхипе 18-мĕш хут ирттереççĕ. Вăл Çĕрпӳ округĕнчи Михайловка ялĕн таврашĕнче утă уйăхĕн 17–18-мĕшĕсенче иртет.**

Çак мероприятие килме 68 компани заявка тăратнă та ĕнтĕ, вĕсенчен 34 организацийĕ – техника туса кăларакансем. Вĕсем 16 регионтан 227 йышши техникăпа хатĕр-хĕтĕр илсе килĕç. Уй кунĕнче выльăх апачĕ хатĕрлемелли, акмалли-лартмалли, тĕрлĕ культурăна пуçтарса илмелли техникăсен куравĕ иртĕ. Çавăн пекех ĕç тата практика мероприятийĕсем йĕркелĕç. Çавна май курма пыракансем çĕнĕ сортсем тата ял хуçалăх продукцийĕн тухăçлăхне ӳстерме вĕрентекен семинарсене хутшăнма, ял хуçалăхĕн наукăпа тĕпчев институчĕн сăнав лаптăкĕсемпе паллашма пултарĕç.

## Чăваш Ен тӳпи те курăмлă

**ВДНХра «Раççей» курав хайĕн ĕçне вĕçленĕ. «Финишра» Чăваш Ен экспозицине Вăрнарсем йышăннă – çак округ кунĕсем иртнĕ. 250 кунра курава 18 миллион çын пырса курнă.**

Ахальтен мар ĕнтĕ РФ Президенчĕн Администрацийĕн ертӳçин пĕрремĕш çумĕ Сергей Кириенко курав планета çинче халăх чи йышлă пулакан 10 вырăн шутне кĕнине çирĕплетнĕ. Çакăнта, паллах, Чăваш Ен тӳпи те курăмлă. Чăваш Акатуйĕн кунĕнче кăна унта 165 пин çын пулнă. Куравра регионăн 12 министерстви, 10 хулипе округĕ хайсен ĕçĕ-хĕлĕпе, çитĕнĕвĕсемпе паллаштарнă. Çак ĕçе йĕркелеме кăна 2,5 пин ытла çын хутшăннă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев пурне те тав тунă. Экспозицисен хаклавĕн рейтингĕнче республика тăваттăмĕш вырăн йышăннă (пĕрремĕшĕнче – Мускав).

Февраль уйăхĕнче куравра наци çитĕнĕвĕсен «Çамрăксен политики» форумĕнче Тăвайри ăстаçăсем – Наталия Федорова, Эльза Степанова тата Алина Федорова мастер-класс ирттерсе, ал ĕçĕн çĕнĕ майĕсемпе паллаштарнă.

## Пултарулăха аталантарма условисем лайăх

**«Вĕренӳ» наци проекчĕ шайĕнчи «Кашни ачан ăнăçлăхĕ» («Успех каждого ребенка») проект Тăвай округĕнче ăнăçлă пурнăçланса пырать. Çак проект пултарullă ачасене тупса палăртса, вĕсен ăсталăхне аталантарассипе çыхăннă. Çакăн пек хушма пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенчен пĕри вăл – Тăвайри ача-пăча ӳнер шкулĕ. Унăн директорĕ Ирина Григорьева искусство шкулĕнче 5 тытăмпа вĕренӳ программине йĕркелени палăртрĕ. Хор, эстрада уйрăмĕсенче, ӳкерес, тĕрлĕ инструментсемпе калама-выляма вĕрентес, халăх юрри-кĕввипе çыхăннă пултарулăха аталантарас енĕпе 9 педагог пĕлӳ парать. Пĕрремĕш класа 6 çултан иртнĕ ачасене вĕренме илеççĕ. Кăçал шкулта тĕрлĕ ялсенчи 137 ача хушма пĕлӳ илнĕ.**

Кунти «Тайна», «Забава», «Веселые нотки» ансамбльсене ялсенче лайăх пĕлеççĕ, пур çĕрте те ăшшăн йышăнаççĕ. «Тайна» ушкăн кăçал «Жемчуженки Чувашии» конкурс-фестивалĕн тĕрлĕ тапхăрĕ витĕр ăнăçлă тухса республикăра çĕнтернĕ, диплома тивĕçнĕ.

Республика кунĕ Тăвай округĕнче иртнĕ май, искусство шкулĕнчи 80 ытла ача пултарулăхне кăтартнă «Ача-пăча акатуйĕнче», сехет çурă пынă концертра хăнасен кăмăлне çĕкленĕ. Уявра ӳкерчĕксен куравĕнчи çамрăк ӳнерçĕсен ăсталăхне те пысăк хак панă.

Çакна та палăртса хăварни вырăнлă пулĕ, 2024 çулта Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ округри 36 стипендиатран 9-шĕ искусство шкулĕнче вĕренекенсем – Елена Алексеева, Анастасия Андреева, Яна Иванова, Виктория Краснова, Анна Ларионова, Ксения Матвеева, Кристина Табаева, Александра Фирсова, Кристина Шерне.

Талант пур ачасене хушма пĕлӳ майĕпе аталантарса пыни уйрăм çемьесен çитĕнĕвĕнче те курăнать. Тăвайри Александрпа Марина Владимировасен аслă хĕрĕ Лилия, регион шайĕнчи тĕрлĕ конкурс лауреачĕ, музыка шкулĕ хыççăн Шупашкарти культура институтĕнче çыхăнтарнă малашлăхне. Алла диплом илнĕ çамрăк халĕ ЧР культура министерствин специалистĕнче тăрăшать. Аппăшĕ хыççăн Катя йăмăкĕ «эстрада» уйрăмĕнче вĕренсе сцена çине тухнă, «Тайна» ансамбльпе таçта та çитнĕ. Халĕ кĕçĕнни Елизавета çав ушкăнра юрлать.

«Тăвайри пек оркестр урăх çук пулĕ республикăра»,–тенине нумайăшĕнчен илтнĕ. Пĕр патриотла мероприяти те, концерт та вĕсемсĕр иртмест. Тĕрлĕ музыка инструменчĕсемпе калакан çамрăксене пĕрлештерет çак коллектив. Вĕренсе тухнă хыççăн та çыхăнăва татмаççĕ вĕсем. Хăшĕсем хăйсем ача-пăча коллективĕсене ертсе пыраççĕ.

Ача-пăчана тарăн пĕлӳ парасси пурлăхпа техника шайĕнчен те килет. Тĕрлĕ бюджетсенчен укçа-тенкĕ уйăрнипе ача-пăча ӳнер шкулĕнчи пӳлĕмсене тĕпрен юсаса çĕнетнĕ, музыка инструменчĕсем, тĕрлĕ хатĕр, сĕтелпукан илнĕ. Ашшĕ-амăшĕ те вĕренме условисем туса панипе кăмăллă. Паллах, унта пухнă пĕлӳ ачасен пултарулăхне аталантарма пулăшнисĕр пуçне, професси çулне суйласа илнĕ чухне те ырă витĕм кӳрет.

**Раиса ШУМОВА**




## АПКна пулăшса

**2024 çулта республикăн агропромышленноç комплексне пулăшмашкăн 5 миллиард тенкĕ уйăрма пăхнă. Çав шутра ял хуçалăх производстви валли – 3,2 миллиард, ялсене комплекслă майпа аталантарма – 1,1 миллиард, çăмăллăхлă кредитсемпе пулăшма – 706,8 миллион тенкĕ.**

Шупашкарти «Каскад» суту-илӳ комплексĕн цоколь хутĕнче «Пехет» агромаркет уçас ыйтупа ĕçлеççĕ. 54 пин тăваткал метрпа танлашакан лаптăкра 107 суту-илӳ вырăнĕ пулĕ, вĕсене фермерсем, вырăнта туса кăларнă, çитĕнтернĕ ĕçме-çимепе сут тăвакансем йышăнĕç.




ÇЫРĂНТАРУ – 2024

«Ял ĕçченĕ» хаçата 2024 çулхи июль-декабрь уйăхĕсенче илсе тăма çыхăну уйрăмĕсенче çырăнтараççĕ.
Пилĕк уйăха – 516 тенкĕ те 45 пус. Альтернативлă йĕркепе çырăнмалли хак – 360 тенкĕ.

ÇЕМЬЕ, ЮРАТУПА ШАНЧĂКЛĂХ КУНĔНЧЕ

# Кĕрекере – ылтăн тата кевер юбилярсем

**Çемье – обществăн тĕп тытăмĕ, унта килĕшӳпе ăнланулăх хуçаланмалла, çирĕп çемье – çĕршыв тĕрекĕ. Çакна тĕпе хурса тĕрлĕ мероприяти хатĕрлесе ирттереççĕ Тăвай муниципалитет округĕнче. Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче ЗАГС пайĕ сумлă çемьесене чысласа юбилейлă туйсен уявне йĕркеленĕ. Темиçе кун маларах кăна икĕ мăшăра çемье чăмăртанă ятпа саламланă кунта.**

Уяв кĕрекинче – пурнăç çулĕпе пĕрле утакан «ылтăн» юбилярсем – Тĕмерти Вячеслав Егоровичпа Жульетта Федоровна Горбуновсемпе бриллиант туйне кĕтсе илнĕ Тăвайри Михаил Яковлевичпа Александра Николаевна Яковлевсем. Горбуновсем кун-çулне вĕрентӳ ĕçĕпе, Яковлевсем ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă.

Çемье хаклăхне упраса, пĕр-пĕрне хисеплесе, юратса пурăннăшăн Михаил Яковлевичпа Александра Николаевна тата Вячеслав Егоровичпа Жульетта Федоровна «Юратупа шанчăклăхшăн» общество медальне тивĕçнĕ. Округ администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, Тĕмер ял территори пайĕн ертӳçи Геннадий Иванов, Тĕмер шкулĕн директорĕнче нумай çул ĕçленĕ Альбина Николаева, Зоя Пуршевапа Елизавета Индюкова педагог-ветерансем, АПК ветеранĕсен округри канашĕн ертӳçи Николай Ивановпа унăн пайташĕ Людмила Павлова, ачисемпе мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, юлташĕсем саламласа ырă та вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, килĕшӳпе тăнăçлăх суннă.

ЗАГС пайĕн ертӳçи Валентина Новикова юбилейлă туйсен кĕнеки ырă ятлă икĕ мăшăрăн çемье историйĕпе пуянланнине пĕлтерчĕ.

Мендельсон маршĕ янăранă май, Яковлевсемпе Горбуновсем юбилейлă туйсен кĕнекине алă пусса çирĕплетрĕç.

Аслисен канашĕ çамрăксемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса, хăйсен çемье çирĕплĕхĕн вăрттăнлăхĕсене уçса ромашка çеçки çине ăшă сăмахсем çырчĕç мăшăрсем, вĕсене çыпăçтарса чечек ăсталарĕç, çамрăксене парнелерĕç.

«Тăвай ен» ансамбль уяв хăнисене çемье, анне, юрату çинчен хывнă юрăсемпе килентерчĕ. Уява пухăннисем сĕннипе çирĕп те общество пурнăçĕнчи хастар Яковлевсемпе Горбуновсен çемйисемпе паян тĕплĕнрех «Манăн çемье – манăн пуянлăх» ятарлă страницăра паллаштаратпăр.

**Раиса ШУМОВА**



НАЦИ ПРОЕКЧĔ

# Амăш капиталĕ – 784 çемье валли

**Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта республикăри амăш капиталĕ шучĕпе 784 çемьене 77,5 миллион тенкĕ куçарса панă.**

Вăл шутран:

496 çемьене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 69,8 миллион тенкĕ,

175 çемьене пĕр хутчен 20 пин тенкĕ тӳлев илме 3,5 миллион тенкĕ,

108 çемьене ачасене вĕрентме 3,5 миллион тенкĕ,

5 çемьене автомобиль туянма 0,7 миллион тенкĕ.

2012 çултанпа республикăри амăш капиталĕ шучĕпе нумай ачаллă 16083 çемьене 1397,5 миллион тенкĕ куçарса пулăшнă.

Республика амăш капиталĕпе виçĕ е ытларах ача çуралнă çемьесене тивĕçтереççĕ. Çак ĕç «Демографи» наци проекчĕн «Финансовая поддержка семей при рождении детей» регион проекчĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать.

**ЧР Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерстви**

СОЦИАЛЛĂ ÇĂМĂЛЛĂХСЕМ

# Пенсие маларах тухаççĕ

**Кăçал çулталăк пуçланнăранпа Чăваш Енри 200 ытла ашшĕ-амăшĕ вăхăт çитиччен пенсие тухнă. Вĕсем пурте – инвалид ачасен ашшĕ-амăшĕ. Çакă инвалид ачана пăхса ӳстерекен ашшĕ-амăшĕнчен пĕрин срокченех тивĕçлĕ канăва тухма право пуррипе çыхăннă.**

Ниçта та ĕçлемен ашшĕ е амăшĕ инвалид ачана пăхни страхлав стажне кĕрет, ăна 1,8-па танлашакан пенси коэффициенчĕпе шутлаççĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн инвалид ачан амăшĕ пенсие 50 çулта тухма пултарать (ачана 8 çулччен пăхнă пулсан), ашшĕ – 55 çулта. Çак вăхăта пухăннă страхлав стажĕ хĕрарăмăн 15 çултан пĕчĕк пулмалла мар, арçыннăн – 20 çултан, коэффициентпа – 28,2-чен.

Срокчен пенсие малтан амăшĕ, кайран ашшĕ тухма пултарать. Калăпăр, амăшĕ 50 çулта пенсие тухать, ватлăхпа пенсие тухмалли вăхăт çитсен вара вăл страхлав пенсийĕ çине куçать. Çакăн хыççăн ачан ашшĕ 55 çулта пенсие тухма пултарать. Çемьере икĕ е ытларах ача инвалид пулсан, ашшĕ те, амăшĕ те пĕр вăхăтрах срокченех пенси çине тухма пултараççĕ.

**РФ Социаллă фондăн Чăваш Енри уйрăмĕн пресс-службин**

АСĂРХАНĂР!

# Шыв-шур пурнăçа татать

**Шăрăх çанталăка пула çынсем шыв-шур патне туртăнаççĕ. Шывра асăрхануллă пулмаллине пурте пĕлетпĕр-ха, анчах...**

Утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче Патăрьел округĕнчи Çĕньялта çын пĕвере путса вилнĕ. Унăн виллине водолазсем шыраса тупнă, çыран хĕррине илсе тухнă. Утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче вара Муркаш тăрăхĕнче 55 çулти арçын пĕвере шыва кĕнĕ чухне путнă. Çавăн пекех нумаях пулмасть Атăл леш енчи санатори çывăхĕнче икĕ çамрăкăн пурнăçĕ татăлнă – 19-ти тата 21 çулти студентсем шывран тухайман.

Çулталăк пуçланнăрапа республикăра 21 çын путса вилнĕ, вĕсенчен 3-шĕ – ачасем.

СПОРТ

# Иккĕмĕш хут

**Утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри «Спорт çĕршывĕ» марафонăн республика тапхăрĕ иртет.**

Çак мероприятие РФ Ял хуçалăх министерстви ертсе пынипе тата «Раççей ялĕ» проект пулăшăвĕпе иккĕмĕш хут йĕркелеççĕ. Ăмăрту Çĕрпӳри «Асамат» спорт шкулĕн стадионĕнче иртĕ. Унта ялта пурăнакан спортпа туслă çынсем хутшăнĕç. Паллах, муниципалитет округĕсенче çĕнтернисем тупăшĕç. Республика шайĕнче мала тухнисем вара Пĕтĕм Раççейри ăмăртусенче Чăваш Ен чысне хӳтĕлĕç.

Иртнĕ çул Тăрмăшри Сергейпа Екатерина Михайловсен çемйи «Спорт çĕрĕ» проекта хутшăнса Çĕрпӳри, Етĕрнери спорт тупăшăвĕсенче мала тухнă. Чăваш Ен командипе Мускаври ăмăртусене хутшăннă.

ЭПИР ПĔРЛЕ!

# «Пирĕнтен пулăшу пултăр»

**Ятарлă çар операцине хутшăнакансене пулăшакансен ыр кăмăллăх ĕçне йĕркелесе пыракан Наталия Федорова çапла пĕлтерчĕ: мобилизаци пуçланнăранпа салтаксем патне хӳтĕленмелли 1306 маскировка тетелĕ, 274 нашлемник, 9 костюм çыхса ăсатнă.**



Тăвайри социаллă пулăшу паракан центр çумĕнчи «Активлă ватлăх» клубри волонтерсен пĕр ушкăнĕ типĕтнĕ сиплĕ чей курăкĕсене пакетсем çине тултаратчĕ. Тепĕр ушкăнри хастар хĕрарăмсем – Тамара Александрова, Зинаида Иванова, Светлана Чернова, Надежда Данилова, Екатерина Федотова, Галина Исаева, Людмила Кузьмина, Раиса Иванова, Ольга Васильева, Вера Ермолаева черетлĕ маскировка тетелне çыхассине вĕçлесе çĕнĕ ĕçе пуçăнчĕç. Çак ĕç вара пĕрре те çăмăл мар. Сеткăсем тĕрлĕ калăплă пулнăран хăйăвĕсене те тĕрлĕ виçепе касмалла, унтан рулонласа чĕркемелле. Çак хатĕрлевсенчен çыхăнаççĕ те ĕнтĕ тетелсем.



Сетка çыхакансенчен пĕри те тепри хăйсен ĕçне çăмăллатса хатĕр лентăсемпе тивĕçтерекен Борис Александрова ырласа калаçрĕ, тав турĕ. «Пирĕн Борис Анатольевич ку таранччен Мускава çитсе килмеллех те каснă пулĕ лентăсене!»–тесе шӳтлесе илме те манмарĕç.

Борис Анатольевич линипе техника цехĕнче инженерта ĕçлесе канăва тухнă. Сетка çыхма çӳрекен мăшăрĕ Тамара Васильевна хыççăн хăй те чун ыйтнипе пулăшу ĕçне кӳлĕннĕ. Ачисем те, мăнукĕсем те пулăшаççĕ вĕсене.

Пирĕнтен мĕн чухлĕ те пулин пулăшу пултăр. Тылпа фронт çирĕп пулни çĕнтерĕве çывхартĕ – çак шухăш пĕрлештерет кĕмĕл волонтерсене.

**Раиса ШУМОВА**

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

# Паянхи ҫамрӑксем те пултаруллӑ

**Енӗш Нӑрвашран тухнӑ пултаруллӑ ентешсемпе Тӑвай тӑрӑхӗ чӑннипе те мӑнаҫланать. Паянхи хастар та ӑслӑ-тӑнлӑ ҫамрӑксемпе те мухтанмалӑх пур.**

Ҫак кунсенче ял ҫийӗн савӑнӑҫлӑ хыпар хӑвӑрт саланчӗ – Рада Николаевнапа Сергей Васильевич Ивановсен ывӑлӗ Николай Сергеевич «Раҫҫей цифра трансформацийӗн лидерӗсем» конкурсра мала тухнӑ, чыслав саманчӗпе те паллашма май тупрӗ чылайӑшӗ. Ял ҫыннисемшӗн те, округшӑн та Раҫҫей шайӗнчи конкурс ҫӗнтерӳҫи Енӗш Нӑрвашран пулни пысӑк ҫитӗнӳ, паллах.



Николай Ивановпа хайӗнпе те, амӑшӗпе те ҫыхӑнма май килчӗ. Енӗш Нӑрваш шкулӗнчен лайӑх вӗренсе тухнӑ каччӑ 2014 ҫулта Чӑваш патшалӑх университечӗн информатикӑпа шутлав факультетне вӗренме кӗнӗ. Магистратурӑпа бакалавриата ылтӑн медальпе пӗтернӗ. Малтанах Шупашкарта «Экра», Мускавра «Миртех» организацисенче ӗҫленӗ. 2022 ҫулта ҫемье ҫавӑрса Шупашкарта пурӑнаҫҫӗ, «Альфа-Банкра» тӑрӑшать хальхи вӑхӑтра. Кӗскен ҫапларах унӑн биографийӗ.

Ҫак конкурса ҫулленех ирттереҫҫӗ. Унпа пӗр ушкӑнра университетри тусӗ, Ҫӗрпӳри Игорь Федоров тата мӑшӑрӗ Екатерина пулнӑ. Николай вӗсен тӳпине пысӑка хурса хаклерӗ.

Н.Иванов шкул саккинченех информатикӑпа туслӑ. Ялти шкула районта чи малтан компьютер илсе килсе вырнаҫтарни те ҫынсен асӗнчех. Михаил Сергеевич Майраслов вӗсен шкул пурнӑҫне нумай ҫӗнӗлӗх кӗртнине, хӑй информатика кружокне ҫӳренине, олимпиадӑра призер пулнине кӑмӑлтан аса илчӗ. Ытти учительсене те тав турӗ.

Николай Ивановра пысӑк шанӑҫ пулнине палӑртаҫҫӗ ӗҫтешӗсем. Мӗнех, малашне те ӑнӑҫусем сунатпӑр хамӑр ял ҫамрӑкне.

**Надежда ЧЕРНОВА, ял старости**

# Министр Тавне тивӗҫнӗ

**Республика кунӗнчи уявра ӗҫре пысӑк хисепе тивӗҫнисене тӗрлӗ шайри наградӑсемпе чысларӗҫ. Агропромышленность комплексне аталантарма пысӑк тӳпе хывнӑшӑн Грачев хресчен-фермер хуҫалӑхӗнчи машинӑпа ӗне сӑвакан Надежда Михайловна Димитриева оператор Чӑваш Республикин ял хуҫалӑх министрӗн Тавне тивӗҫ пулчӗ.**



Хуҫалӑх иртнӗ ҫул кашни ӗнерен 8557 килограмм сӗт суса илнӗ, округӗпе вара 6931 килограмм пулнӑ. Ку вӑл тӗрлӗ шайри ял хуҫалӑх предприятийӗсенчен чи пысӑк кӑтарту. Продукци туса илессипе кӑҫалхи ҫур ҫулта та иртнӗ ҫулхи ҫав тапхӑртинчен чылай ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗ, сӑвӑм кашни ӗне пуҫне 4659 килогрампа танлашнӑ, ӳсӗм – 695 килограмм.

Продукци калӑпӑшӗ пысӑкланса пынинче, паллах, Надежда Михайловнан тӳпи те пӗчӗк мар. «Вӑр-вар, сӑпайлӑ, питӗ харсӑр, тӳрӗ чунлӑ»,– терӗҫ ун пирки ӗҫтешӗсем те. Мӑшӑрӗпе 3 ача пӑхса ӳстереҫҫӗ. Аслӑ хӗрне ҫемьелентерсе кукамай та пулнӑ. Тепӗр хӗрӗ Тӗмер шкулӗнче вӗренет, кӗҫӗн ывӑлӗ садик ачи ҫеҫ-ха.

Надежда Димитриевапа чыслав саманчӗ хыҫҫӑн кӑштах калаҫса илме май пулчӗ. 2012 ҫултанпа тӑрӑшать вӑл Грачев фермер хуҫалӑхӗнче. Ӗҫчен те туслӑ ҫемьери пек коллектив чӑмӑртаннипе, ӗҫ условийӗсене лайӑхлатса пынипе кӑмӑллӑ. Ҫаксем те, шалӑвне вӑхӑтра тӳлесе пыни те ӗҫлес туртӑма ӳстерет. Ял сӑн-сӑпачӗ юлашки ҫулсенче ҫӗнелсе улшӑнни ҫынсен кӑмӑл-туйӑмне ҫӗклenine палӑртрӗ харсӑр доярка.

**Раиса ШУМОВА**

РЕСПУБЛИКӐРА, ОКРУГРА

• Чӑваш Енри ҫулсем ҫинче кӑҫалхи январьмай уйӑхӗсенче аварисен шучӗ, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 18 процент чакнӑ. Ҫапах та ҫак тапхӑрта административлӑ право йӗркине пӑснӑ 591 тӗслӗхе палӑртнӑ, руль умне ӳсӗрле ларнӑ 1509 ҫынна тытса чарнӑ, хирӗҫ килекен ҫул ҫине юраман вырӑнта тухнӑшӑн 3212 протокол ҫырнӑ, ҫуран ҫӳрекенсене ҫул урлӑ каҫарман 6347 водителе явап тыттарнӑ.

• Нумай ачаллӑ ҫемьесен ҫӗр лаптӑкӗ вырӑнне 250 пин тенкӗ илме право пур. Пӗлтӗртенпе ҫак майпа 407 ҫемье усӑ курнӑ, сертификата тивӗҫнӗ.

• Граждансен тупӑшне пысӑклатма социаллӑ контракт пулӑшать. Пӗтӗмпе 16 пине яхӑн социаллӑ контракт йӗркеленӗ. Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа 1600 ытла контракт ҫырнӑ.

• Республикӑра социаллӑ предприятисен хисепӗ ӳссех пырать. 2021 ҫулта предпринимательлӗхӗн 30 субъекчӗн кӑна ҫавнашкал статус пулнӑ пулсан, 2024 ҫулта ҫак кӑтарту виҫӗ хут пысӑкланнӑ – Чӑваш Енри пӗчӗк предпринимательлӗхӗн 95 субъектне социаллӑ предприяти статусне панӑ. Ҫакӑ мӗн парать-ха? Пӗрремӗшӗнчен, финанс пулӑшӑвӗ, иккӗмӗшӗнчен, 2025 ҫултан социаллӑ предприятисем валли налук ҫӑмӑллӑхӗсем вӑя кӗреҫҫӗ.

• Ҫырла фестивалӗ кӑҫал республикӑра икӗ куна – июлӗн 20–21-мӗшӗсене тӑсӑлӗ. Малтанхи кунне Шупашкарти «Ҫырла центрӗ» базӑра пулӗ, кунта ҫырла сутӗҫ, тӗрлӗ мероприяти иртӗ. Иккӗмӗш кунне Шупашкар округӗнчи «Ивушка» питомнике отрасль ӗҫченӗсем пухӑнӗҫ, кунта лекцисем, ӑсталӑх класӗсем, апат-ҫимӗҫ лапамӗсем тата юрӑ-ташӑ пулӗҫ. Фестиваль вӑхӑтӗнче республикӑри 19 фермер тӗрлӗ хунав, ҫырла, варени-джем сутма кӑмӑл тунӑ. Тӑвайри пасарта сӑмахран, ҫырла чылайранпа сутаҫҫӗ.

• Чӑваш Республикинчи аслӑ шкулсенче тӳлевсӗр майпа вӗренме кӗме кӑҫал пурӗ 3713 вырӑн уйӑрнӑ.

• Июлӗн 14-мӗшӗнче «Хисеп Палли» орден кавалерӗ, экономика наукисен кандидачӗ, ЧАССР патшалӑх план комитечӗн председателӗ пулнӑ Михаил Андреевич Андреев ҫуралнӑранпа 120 ҫул ҫитет. Вӑл 1904 ҫулта пирӗн районти Ураскасси ялӗнче чухӑн хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. М.А.Андреев СССР план комитетӗнче те ӗҫленӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ пулнӑ. 1956 ҫулта Мускавра вилнӗ.

**Иван ГЛАДКОВ хатӗрленӗ**

ЯЛ ХУҪАЛӐХӖ

**ТӐВАЙ ОКРУГӖНЧИ ХУҪАЛӐХСЕМ 2024 ҪУЛХИ ПӖРРЕМӖШ ҪУР ҪУЛТА ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ ПРОДУКЧӖСЕМ ТУСА ИЛНИНЕ КӐТАРТНИ**

| Ял хуҫалӑх предприятийӗсем, хресчен-фермер хуҫалӑхӗсем | Сӗт туса илнӗ, тоннӑпа | | | | Кашни ӗнерен сӗт сунӑ, кг | | | | Аш-какай туса илнӗ, тоннӑпа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | 2023 | 2024 | 2023 ҫулхипе танлаштарсан, % | 2023 ҫулхинчен ӳснӗ (+) е чакнӑ (-) | 2023 | 2024 | 2023 ҫулхипе танлаштарсан, % | 2023 ҫулхинчен ӳснӗ (+) е чакнӑ (-) | 2023 | 2024 | 2023 ҫулхипе танлаштарсан, % | 2023 ҫулхинчен ӳснӗ (+) е чакнӑ (-) |
| «Кубнинский» а/ф | 330 | 343,8 | 104,2 | +13,8 | 3300 | 3438 | 104,2 | +138 | 10,6 | 10 | 94,3 | -0,6 |
| «Акконд-агро ф.» АО | 4030,6 | 4352,8 | 108 | +322,2 | 4130 | 4460 | 108 | +330,1 | 102,3 | 128,8 | 125,9 | +26,5 |
| «Дружба» ЯХПК | 561,9 | 555,2 | 98,8 | -6,7 | 4460 | 4406 | 98,8 | -53,2 | 36,8 | 38 | 103,3 | +1,2 |
| «Новый путь» ЯХПК | 114,1 | 111,5 | 97,7 | -2,6 | 2153 | 2104 | 97,7 | -49,1 | 2,1 | 4,9 | 233,3 | +2,8 |
| «Чутеевский» ЯХПК | 420,5 | 423,1 | 100,6 | +2,6 | 2474 | 2489 | 100,6 | +15,3 | 2,2 | 5 | 227,3 | +2,8 |
| Д.Алексеев ХФХ | 123,6 | 117,7 | 95,2 | -5,9 | 3433 | 3269 | 95,2 | -163,9 | 2,1 | 2,5 | 119,1 | +0,4 |
| Ю.Борисов ХФХ | 24,1 | 22 | 91,3 | -2,1 | 2191 | 2000 | 91,3 | -190,9 | 0,3 | 0,7 | 233,3 | +0,4 |
| Р.Васильев ХФХ | 61,7 | - | - | -61,7 | 2468 | - | - | - | - | 1,6 | - | +1,6 |
| В.Грачев ХФХ | 1110 | 1397,6 | 126,9 | +287,6 | 3964 | 4659 | 117,5 | +694,4 | 39,9 | 54 | 135,3 | +14,1 |
| Ю.Гурьев ХФХ | 32 | 30,9 | 96,6 | -1,1 | 2286 | 2207 | 96,6 | -79 | 0,4 | 1,5 | 375 | +1,1 |
| С.Илларионов ХФХ | 1678,7 | 2132,7 | 127 | +454 | 3815 | 4847 | 127 | +1031,8 | 42,8 | 40,5 | 94,6 | -2,3 |
| В.Козлов ХФХ | 87 | 100,3 | 115,3 | +13,3 | 3955 | 3858 | 97,6 | -97 | 1,8 | 1,5 | 83,3 | -0,3 |
| С.Муханов ХФХ | 127,4 | 149,1 | 117 | +21,7 | 2316 | 2711 | 1178 | +394,5 | - | - | - | - |
| В.Никитин ХФХ | 29,1 | - | - | -29,1 | 1940 | - | - | - | - | - | - | - |
| Вл.Николаев ХФХ | 248,1 | 103,9 | 41,9 | -144,2 | 2481 | 1484 | 59,8 | -996,7 | 2 | - | - | -2 |
| В. Николаев ИП | 71,1 | - | - | -71,1 | 3555 | - | - | - | - | - | - | - |
| А.Федоров ХФХ | 99,1 | 72,4 | 73,1 | -26,7 | 4955 | 3448 | 69,6 | -1507,4 | 1,9 | 0,6 | 31,6 | -1,3 |
| О.Григорьева ИП | 105,1 | 98,2 | 93,4 | -6,9 | 3754 | 1853 | 49,4 | -1900,7 | -1 | - | - | - |
| Н.Алексеев ХФХ | 16,6 | 44,4 | 267,5 | +27,8 | 1383 | 3415 | 246,9 | +2032,1 | 0,4 | 0,2 | 50 | -0,2 |
| Н.Федорова ХФХ | - | - | - | - | - | - | - | - | 10,2 | 18,6 | 182,4 | +8,4 |
| Д.Емельянов ХФХ | 44,7 | 68,4 | 153 | +23,7 | - | - | - | - | - | - | - | - |
| А.Моряков ХФХ | - | - | - | - | - | - | - | - | 6 | - | - | -6 |
| Пӗтӗмпе: | 9318,8 | 10124 | 108,6 | +805,2 | 3723 | 4105 | 110,3 | +382,4 | 277,8 | 308,4 | 111 | +30,8 |

**Тӑвай округӗнчи ял хуҫалӑх предприятийӗсемпе хресчен-фермер хуҫалӑхӗсем выльӑх-чӗрлӗххӗн ытларах продукци илес тӗллевпе вӑй хурса ӗҫлесе кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулта сӗт туса илессине 10124 тоннӑна ҫитернӗ, производствӑна 8,6 процент ӳстернӗ, иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртинчен 805,2 тонна нумайрах продукци туса илнӗ. Сергей Илларионов, Валерий Грачев хресчен-фермер хуҫалӑхӗсемпе «Акконд-агро фирма» акционерлӑ обществӑра сӗт уйрӑмах нумай хушӑннӑ. Асӑннӑ виҫӗ хуҫалӑхӗнче те ҫакна, тӗпрен илсен, ӗнесен продуктивлӑхне ӳстернӗ никӗс ҫинче туса илнӗ. Сергей Илларионов хресчен-фермер хуҫалӑхӗнче, тӗслӗхрен, ӗнесем кӑҫалхи январь-июнь уйӑхӗсенче иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртинчен вӑтамран 1032 килограмм ытларах сӗт антарнӑ, ултӑ уйӑхра продуктивлӑх вӑтамран 4847 килограма ҫитнӗ. «Аккондра» та вӑтамран 330 килограмм хушӑннӑ продуктивлӑх. Ҫакӑ ӗнтӗ асӑннӑ коллективсенче ку тӗллевпе ҫуллахи майсемпе те туллин усӑ курма тӑрӑшнине кӑтартса парать.**

**Малашне курӑк типес енне кайса пыма пултарать. Чылай хушӑ шӑрӑх тӑни те ҫакӑн патне илсе пырать. Апла пулсан выльӑхсене симӗс апатпа туллин тивӗҫтересси, тутлӑхлӑ веществосемпе шайлаштарнӑ рационпа тӑрантарасси ҫине тата тимлӗрех пӑхма тивет. Тулӑх тӑрантарсан продукци илесси чакмӗ. Ҫакӑ аш туса илессине те тӳрремӗнех пырса тивет. Кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулта ӑна иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртинчен 11 процент ытларах та туса илнӗ. Никӗс пур, выльӑхсем самӑртассине пӗлсе йӗркелесен, вӑй хурсан, ӳсӗнет авӑ. Ҫакна та палӑртса хӑвармалла: кашни ӗҫрех резервсем пур.**

**Ҫынсен кил хуҫалӑхӗсенчи продукцие те шута илсен, округӗпе пур категорири хуҫалӑхсенче пурӗ пӗрле 12587,8 тонна (106,8 процент) сӗт, 586,4 тонна (105,1 процент) аш-какай туса илни курӑнать.**

**Иван ГЛАДКОВ**

# МАНĂН ÇЕМЬЕ – МАНĂН ПУЯНЛĂХ

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçланать

## Çамрăк ăрушăн тĕслĕх

**Яковлевсен çемйи – Тăвай тăрăхĕнче ятлă-сумлисенчен пĕри. Михаил Яковлевич Вăтаялĕнче çуралнă. Турă çырнине вара, Вăрнар районĕнчи Вăрманкас пикине Александрăна, хăйĕн тăван ялĕпе юнашарти Кармалта тĕл пулнă. Амăшĕн çуралнă ялне хăнана кайсан паллашнă хӳхĕм те сăпай хĕрпе. Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче вĕренсе агроном дипломне илнĕскере «Слава» колхоза ĕçлеме янă пулнă. Çамрăк специалист каччă чĕринче пирвайхи çепĕç туйăмсем çуратнă. Çак вăхăтранпа утмăл çул иртнĕ пулсан та вĕсен чĕрисенче çав хĕлхем ялкăшнине пĕр-пĕрне ăнланса та килĕшӳре пурăннинченех туйса илетĕн. Вĕсем юратăва халĕ чи çывăх çыннисемпе – ачисемпе, мăнукĕсемпе пайлаççĕ. Йывăрлăхра вара пулăшу аллине ыттисене те тăсма хатĕр.**

Михаил Яковлевич Шупашкарти ял хуçалăх институтĕнче вĕреннĕ вăхăтра мăшăрĕ те аслă пĕлӳ илес тĕллевпе куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕ. Пĕчĕк ачине ашшĕ-амăшĕпе хăварса экзамен тытнă вăхăтсем те пулнă. Çав йывăрлăхсене пĕрле тӳссе ирттернĕ çамрăк мăшăр. Александра Николаевна аслисемшĕн лайăх кин пулма тăрăшнă, пĕр-пĕрне сив сăмах каласа кӳрентермен. Мăшăрĕ ялан шанчăкпа тĕрек пулни çинчен асăннă май Михаил Яковлевичăн пурнăç çулне аса илчĕ. Чăннипех мухтавлă та пархатарлă унăн ĕç биографийĕ.

Сакăр класс хыççăн 16 çулхи Михаил Алексин хулинчи строительство комбинатне бетонщика вырнаçнă. Ун хыççăн – çар службиĕ. Магнитогорскри стройтрестра çĕр чаваканра ĕçленĕ хушăра ФЗОра вĕренсе вăтам пĕлӳ илнĕ. Металлурги комбинатĕнче газовырубщикра 4 çул вăй хунă хыççăн пурнăç çулĕ ял хуçалăх институтне илсе çитернĕ ăна. Аслă шкулта инженер-механик специальноçне алла илсенех «Советская Россия» колхозра ĕçлеме пуçланă. Тепĕр икĕ çултан ял хуçалăх управленийĕн тĕп инженерне лартнă, унтан управлени пуçлăхĕн тилхепине шаннă. 1984 çулта Горькири партин аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă. 1978–1990 çулсенче – партин Тăвай райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, районти ĕçтăвком председателĕн пĕрремĕш çумĕ. 1991 çултан пуçласа канăва тухиччenех район администрацийĕн пĕрремĕш çумĕнче – ял хуçалăх управленийĕн начальникĕнче ĕçленĕ. «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕç пулнă. Вăл – Тăвай районĕн хисеплĕ гражданинĕ. Иртнĕ çул ЧР Пуçлăхĕ «Республика умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медальпе чысланă.



Ачисемшĕн, мăнукĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулнă яланах. Çамрăк ăрăва çирĕп чунлă пулма хăнăхтарать унăн пурнăç çулĕ. Çемье пуçĕ çинчен сăмахне тăсса, Александра Николаевна юратнă мăшăрĕ 86 çултине пăхмасăр округри общество пурнăçĕнче активлă пулнине палăртса хăварчĕ. Районти агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен совечĕ йĕркелесе, вунă çул ытла унăн председателĕ пулса ертсе пынă вăл. АПК ветеранĕсен хисепне, сумне ӳстерсе вĕсен килĕ-çурчĕ çине асăну хăмисем вырнаçтарассине йĕркелесе янă. Юбилейĕсемпе чыслăн, йышпа кайса саламлассине ырă йăлана кĕртнĕ. «Михаил Яковлевичăн тивлечĕпе Тăвайри канаш – республикăра чи хастарри. Йышĕпе те пысăк, 25 ветерана пĕрлештерет»,– терĕ темиçе çул каялла уйрăма ертсе пыма пуçланă Николай Ильич Иванов.

А.Н.Яковлева Кармал хуçалăхĕнчен Тăвайне механика отрядне куçнă. Ăсталăхне кура вăрлăх инспекцийĕн начальникне лартнă ăна. Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 42 çул унăн. Виçĕ ачине тивĕçлĕ воспитани парса ӳстернĕ вĕсем. 7 мăнукпа савăнаççĕ халĕ. Ывăлĕ Юрий ашшĕ вĕреннĕ факультетра пĕлӳ илсе, инженер-механик дипломĕпе ĕç династине малалла тăсать, Ярославль облаçĕнче пурăнаççĕ çемйипе, 2 ача ӳстереççĕ. Çак кунсенче мăнукĕ магистратурăран ылтăн медальпе вĕренсе тухни çинчен шăнкăравласа аслашшĕпе асламăшĕн кăмăл-туйăмне çĕклентернĕ!

Яковлевсен Ирина хĕрĕ пулчĕ бриллиант туйра. Вăл аслă пĕлӳллĕ экономист. Тăвайри потребобществăра сутуçăра ĕçленĕ малтан. Халĕ çемйипе Пушкино хулинче пурăнаççĕ. Çуралнă кил яланах ăшăпа, хăтлăхпа çупăрланине, ашшĕ-амăшĕ яланах шăкăл-шăкăл калаçса ăшшăн кĕтсе илнине каларĕ, чи çывăх çыннисене чĕререн тав турĕç Рита хĕрĕпе иккĕшĕ.

– Паллах, ачасем çемйисемпе пĕрмаях килеймеççĕ. Упăшка юнашар пулнишĕн савăнатăп. Вăл юратакан апат пĕçерме тăрăшатăп. Хуçалăхшăн çирĕп алăллă, çемьешĕн чăннипех те тĕрек пулнине паллашнă кунранах курса-туйса тăратăп. Йывăрлăхсене пĕрле пайласа çирĕплĕннĕ пирĕн çемье, пурри-çуккине, пĕр татăк çăкăра та çурмалла пайласа пурăннă,–сăмах хушрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

– Юрату вăл – пĕр-пĕрне хисеплени те, пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе пурăнни те. Çемьери пысăках мар кăлтăксемшĕнех пуçра уйрăлас шухăшсем пулсан пурнăç пулмасть. Йывăрлăхсене çĕнтерме вăй-хал çитермелле. Вăхăтĕнче каçарма пĕлмелле,–шухăшне пĕлтерчĕ Михаил Яковлевич.

Эпир вара Михаил Яковлевича июлĕн 25-мĕшĕнчи çывхаракан 86 çулхи çуралнă кунĕпе ăшшăн саламлатпăр, юратнă мăшăрĕпе çывăх çынсен хӳтлĕхĕнче нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатпăр.

## Пĕр-пĕриншĕн çирĕп тĕрев

**Тĕмерти Горбуновсем пĕрлешнĕренпе 50 çул çитрĕ. Ылтăн туйне ЗАГС пайĕнче паллă тума шутланăран кунĕпех лăпланаймарĕ мăшăр. Çамрăклăхне, çур ĕмĕр каяллине куç умне кăларса асаилĕве путрĕç Вячеслав Егоровичпа Жульетта Федоровна. Тин кăна Шупашкарти педагогика институчĕн физика тата математика факультечĕн студенчĕсемччĕ. Тĕп хулара энергетика техникумĕ пĕтернĕ Тăвай ен каччине вĕренĕве малалла тăсас ĕмĕт илсе çитернĕччĕ аслă шкула. Жульетта Элĕк тăрăхĕнчи Вырăс Сурăм ялĕнче çитĕннĕ, шкул хыççăнах института вĕренме кĕнĕ. 5 çул сисĕнмесĕрех иртнĕ. Патшалăх экзаменне пана хыççăн каччăпа хĕр тепĕр куннех Шупашкарти ЗАГСра çырăннă. Çапла, 1974 çулхи июнĕн 29-мĕшĕ вĕсен пурнăçĕнчи чи паллă кун. Хăй çуралнă Вăрманхĕрри ялĕнче туй тума бортлă икĕ машинăпа студентсене лартса килнине мĕнле-ха асран кăларăн. Тĕмер шкулĕнче хаваспа йышăннă çамрăк специалистсене, хваттер панă. Çакăнта тĕпленсе ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă вĕсем.**



«Астăватпăр-ха Вячеслав Егорович урок иртterме пынине. Аллинче класс журналĕпе пурă кăначчĕ. Нимĕнле вĕренӳ кĕнекисĕр, ниçта пăхмасăр çĕнĕ тема ăнлантаратчĕ,–терĕ халĕ Тĕмер территори пайĕн пуçлăхĕнче тăрăшакан Геннадий Иванов. – Спорт туртăмĕ те вăйлăччĕ. Эпир çамрăк та интеллигентлă учительсене тĕслĕхе хураттăмăр. Вĕсем пек пулма тăрăшнă, паллах. Пĕрле йĕлтĕрпе юнашар яла кайни те шкул ачисен асĕнчех юлнă».

Ачасем физика тата математика предмечĕсемпе ытларах интересленме пуçланă. Алексей Егоровпа Эдуард Максимов районта палăрса, республикăри олимпиадăра тарăн пĕлӳ кăтартнă. Çапла пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ вăтăр çултан та иртнĕ. Ĕçне кура – хисепĕ. Вячеслав Егоровича «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ», «РФ пĕтĕмĕшле вĕренетĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ятсемпе чысланă. Жульетта Федоровна математика учителĕнче 35 çул ĕçленĕ. Директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕн тивĕçне те тӳрĕ кăмăлтан пурнăçласа пынă. Вăл та, мăшăрĕ пекех, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи çитĕнӳсемшĕн «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» ята тивĕçнĕ. Çамрăк педагогсемшĕн яланах ырă наставник пулнă вĕсем.

Горбуновсен икĕ ывăлпа пĕр хĕр çуратса ӳстернĕ. Ачисем пурте аслă пĕлӳллĕ. Александр И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ, Мускавра пурăнаççĕ çемйипе, реклама тытăмĕнче тăрăшать. Татьяна та, ашшĕ-амăшĕ пекех, педагогика институтĕнче вĕреннĕ, графика дизайнĕ енĕпе специальноç илнĕ, Шупашкарта йăва çавăрнă. Кĕçĕн ывăлĕ Андрей та çемйипе Мускавра, спорт дизайнĕ енĕпе вăй хурать.

Горбуновсен хĕрĕ Татьяна ашшĕпе амăшĕ вĕсемшĕн чи хаклă çынсем, çакăнпа пĕрлех чи çывăх тус-юлташ вырăнĕнче пулнине те палăртрĕ: «Пăхатăп та, паян пĕрлешнĕ пекех савăк, юратуллă. Вăр-вар, ĕçчен, харсăр вĕсем. Чупса çӳреççĕ тейĕн. Пирĕн çемьешĕн те тĕслĕх. Вĕсен сĕнӳ-канашĕсене ăша хыватпăр. Пенсие тухсан республика тулашне те ĕçлеме çӳрерĕ атте. Пире, ачисене, пулăшас, терĕ. Темиçе çул каялла вара тăрук йывăр аптăрарĕ. Анне канăç мĕнне сухатса ун патĕнчен хăпмарĕ. Реабилитаци центрĕнче те пулчĕç. Çывăх çынсен тимлĕхĕпе юратăвĕ теме те парăнтарать, ав». Ылтăн юбилярсене Татьянăпа мăшăрĕ Виталий тата вĕсен чĕвĕл-чĕвĕл хĕрĕ Агата чечексем парнелерĕç. Горбуновсем паян виçĕ мăнук хĕрачапа савăнаççĕ. Вĕсемпе пĕрле ăраскаллă туяççĕ.

– 50 çул килĕштерсе пурăннин вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши?–ыйтрăм Жульетта Федоровнăран.

– Ачасене юратупа тимлĕхре ӳстернĕ эпир. Пĕр-пĕринпе туслă пулнипе, пулăшма хатĕррипе савăнтараççĕ, аслă çынсене хисеплеççĕ. Çемье пурнăçĕнче, ман шутпа, чи кирли – пĕр-пĕрне вăхăтра ăнланни, каçарма пĕлни, хисеплени, малашлăха шанăçпа пăхни.

–Çывăх çынсене, юлташсене йывăр вăхăтра пĕрле пулнишĕн тав. Савнă мăшăра, хăть хăçан та ăнланнăшăн, тав тума сăмах та çитес çук. Пĕр-пĕрне хисепленĕрен, итлеме-илтме пĕлнĕрен эпир телейлĕ пулĕ. Çакна хамăрăн ывăлĕсемпе хĕрĕме пама, вĕсемшĕн тĕслĕх пулма тăрăшатпăр,–терĕ кăмăлтан çемье пуçĕ Вячеслав Егорович.

Горбуновсем – питĕ пултаруллă, хастар çынсем. Хăй вăхăтĕнче тĕрлĕ конкурссене хутшăннă. Шкул ачисене ал-ĕç вăрттăнлăхĕсене вĕрентнĕ, вĕсен çитĕнĕвĕсене пĕрле пайланă.

Килти хăтлăхшăн тăрăшакан Жульетта Федоровна мăшăрĕн пултарулăхĕ çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Темĕнле материала та чун кĕртет иккен вăл. Вăрманхĕрри ялĕ çывăхĕнчи çул айккинчи таçтанах илемĕпе сăвапламăхĕпе чуна çывăх часовньăна унăн аллисем ăсталанă. Халĕ тата сăвăсем çырса çынсене тĕлĕнтерме пуçланă. «Ял ĕçченĕ» хаçатра тăтăш пичетленеççĕ хайлавĕсем. СВОри салтаксене халалланă округри сăвăçсен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ. «Тата мĕнле талант пытаннă-ши унра?»–терĕç пĕртăванĕн çемйисемпе çывăх тăванĕсем.

«Кăвак тӳпеллĕ мирлĕ пурнăç, канăçлăх, сывлăх кирлĕ пире»,–тесе вĕçлерĕç калаçăва ылтăн туй кĕрекинчи Горбуновсем.

**Раиса ШУМОВА**

ÇУЛСЕМ ТАТА ÇЫНСЕМ

# Анна аппа 99 çулта

**Июлĕн 2-мĕшĕнче Сăхăтпуç ялĕнче пурăнакан Анна Алексеевна Наумова 99 çулхи çуралнă кунне ирттерчĕ. Ăна сума суса та юратса Тушкилти «Сурпан» фольклор ушкăнĕ саламлама çитрĕ. Игорь Васильевич Кузьмин купăсçă хăй çырнă анне çинчен юрра парнелени пурин чунне те хускатрĕ.**

Анна инке хăй те юрлама юратнă, халĕ те сурпанçăсемпе пĕрле юрласа пычĕ. Тĕлĕнмелле, çав çула çитсе те темĕнле юрă та пĕлет, пурне те ăшшăн тав турĕ юлашкинчен. Анчах эпир унăн юратнă «Сар вĕрене çулçине» юррине юрласа савăнтараймарăмăр.

Анна аппа Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вĕсем Марье аппапа – йĕкĕрĕшсем. Мария Кĕтеснер ялĕнчи Георгий Казанцевпа çемьеленнĕ, вĕсен 6 ачаран пĕр ывăл та пилĕк хĕр çуралнă. Анна вара Сăхăтпуç каччипе Владимир Федорович Наумовпа çемье çавăрнă. 7 ачине пурне те вĕрентсе ура çине тăратнă. Иккĕшĕ çемьеленсе Мускавра тымар янă, тепĕр иккĕшĕ – Шупашкар хулинче, 3 ачи ялта çемье çавăрнă. Анна аппа халĕ Луиза хĕрĕ патĕнче ялта пурăнать. Ачисем яланах килсе çӳреççĕ. 18 мăнук, мăнукĕсен 24 ачи тата пĕр кĕçĕн мăнук унăн.

Пĕр тăван Марияпа Анна çамрăклах питĕ юрлама юратнă. Юрлама çеç мар, Анна Алексеевна ĕçре те харсăрлăхпа палăрнă. 60 çултан иртиччен фермăра, уй-хир бригадинче ĕçленĕ. Пултарулăхĕшĕн нумай грамотăпа числанă. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе те наградăланă ăна. Сурпанçăсем Анна аппана 100 çулне килме сăмах пачĕç. Хăйне вара тепĕр çулхи сумлă юбилейччен ырă кăмăлĕпе пурне те савăнтарса пурăнма сунчĕç.



**Фрида НИКИТИНА**

# Пирĕн паттăр ентешĕмĕр

**Пурăннă пулсан Совет Союзĕн Геройĕ, артиллери полкĕнче служба тивĕçĕсене паттăррăн пурнăçланă Петр Харитонович Бухтулов паян 100 çул тултаратчĕ. Вăл пирĕн Тăвай районĕнчи Мучар ялĕнче 1924 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. 1998 çулта вилнĕ. Пурнăçне, тен, Аслă вăрçă асапĕсем те кĕскетнĕ.**

«Фронта Петр Бухтулов сержант 1943 çулхи февраль пуçламăшĕнче кĕçĕн командирсен шкулне ăнăçлă пĕтерне хыççăн Тĕп командовани резервĕн 16-мĕш артиллери дивизийĕн батарейисенчен пĕрне танксемпе кĕрешекен оруди наводчикĕ пулса пынă. Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче малтанхи кунсенчен пуçласах хăйне çирĕп те хăюллă артиллерист пулнине кăтартса панă»,–тесе çырать хăйĕн «Тăвай енĕн сумлă çыннисем» кĕнекинче Николай Михайлович Яклашкин. Брянск фронтĕнче 1942 çулхи май-июль уйăхĕсенче Петр Бухтулов комсомолец хăйĕн туппинчен персе тăшманăн икĕ танкне тата 100 салтакĕпе офицерне тĕп тунă. Хăюлăхшăн Верховнăй Главнокомандующи Тавне тивĕçнĕ Мучар çамрăкĕ.

1943 çул вĕçĕнче II Украина фрончĕн çарĕсем, 16-мĕш дивизи ун йышĕнче пулнă, Кировоград тата Кривой Рог районĕсенче нимĕçсен контрнаступленине сирсе ывăтма хутшăннă. Ку вăл декабрĕн 22-мĕшĕнче пулнă. Тăшман пирĕн стрелковăй дивизине хупăрласа илес тесе, икĕ дивизипе тата 30 танк пулăшнипе наступление куçнă. Çавăн чухне Петр Бухтулов наводчик орудийĕ çине 7 танк тата 100 ытла автоматчик сĕмсĕррĕн тапăннă. Анчах хăраса ӳкмен хастар наводчик, тăшманăн виçĕ танкне тата 30 яхăн автоматчикне пĕтерне, нимĕçсен контратаки путланса ларнă. Петр Харитоновича вара «Хăюлăхшăн» медальпе наградăланă.

Кашни çапăçурах çавăн пек хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă вăл. 1944 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнчи тан мар çапăçура та Звенигородки районĕнче Петр Бухтулов туппи умĕнчи уйра тăватă çуннă танк ларнă тата автоматчиксемпе танкистсен виллисем выртнă.

Корсунь-Шевченко патĕнчи паттăрлăхшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Нимĕç фашисчĕсене Румыни, Австри территорийĕсенчен хăваласа янă тата Яссо-Кишиневск, Будапешт патĕнче тăшман çарĕсен пуххисене пĕтерне чухне те сахал мар паттăр ĕçсем тунă пирĕн ентеш Бухтулов. Чехословакин Кабелькут хули таврашĕнче нимĕçсем СС танк корпусĕн тата виçĕ пехота дивизийĕн вăйĕпе пирĕн оборона фрончĕн линине татасшăн çуннă. Хаяр çапăçусем эрне тăршшĕпе пынă. Кунта 7-мĕш гварди çарĕн чаçĕсемпе пĕрлех Бухтуловсен 16-мĕш артиллери дивизийĕ те çапăçнă. Бухтулов орудийĕ çине кăна 14 танкпа 12 бронетранспортер тапăнса пынă. Тăшман вутçулăмĕпе пĕтĕм расчет стройран тухнă, Бухтулова хăйне контузи пулнă. Апла пулин те, хăйĕн туппипе хаяр тытăçура нимĕçсен 4 танкне, 3 бронетранспортне çунтарнă, 40 яхăн салтакĕпе офицерне пĕтернĕ. Çар хатĕрĕсемсĕр юлсан та тата орудие тăшман танкĕ таптаса çĕмĕрсен те Бухтулов çухалса кайман, гранатăпа тепĕр тăшман танкне çунтарнă. Çак тан мар çапăçура ăна иккĕмĕш хут контузи пулнă. Çапах та хăйне чĕрĕлле тыткăна илме паман, автоматран пере-пере хупăрлавран тухнă, тепĕр кунне ирхине хăйĕн полкне çитсе ӳкнĕ. Ку çапăçушăн паттăр артиллериста III степень Мухтав орденĕпе чысланă. Çапла çырса кăтартать Николай Михайлович Яклашкин хăйĕн кĕнекинче.

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче, Старая Русса хула таврашĕнче вăрçа кĕрсе, ăна вăл Австрире вĕçленĕ, хăйĕн орудийĕпе пĕрле Аслă Отечественла вăрçă çулĕсемпе ултă пин километр ытла тухнă.

Совет правительстви Петр Харитонович Бухтуловăн çар паттăрлăхне пысăка хурса хакланă, вăл хăй кăна нимĕçсен 16 танкне пĕтернĕ. СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн 1946 çулхи майăн 15-мĕшĕнчи Указĕпе ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Çакăн пек паттăр ячĕпе хисепленсе тăрать те хальхи вăхăтра Тăвайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул. Шкула кĕнĕ çĕрте унăн бюстне те вырнаçтарнă. Паттăрлăх манăçа тухмасть.

Вăрçă хыççăн Петр Харитонович Бухтулов мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ.




**Иван ГЛАДКОВ**

ФИНАНС ПĔЛĔВĔ

# Сбер бонусĕ, ытти те

**Финанс пĕлĕвне, тавракурăма тата ку чухнехи пурнăç мелĕсемпе усă курассине тарăнлатса-лайăхлатса пыни аслă ӳсĕмри çынсемшĕн те ытлашши мар паллах.**

Çак шухăшпах округри социаллă пулăшу паракан центрта ĕçлекенсем, «Активлă вăрăм ĕмĕр» клуб членĕсем ку чухнехи пурнăç майĕсене йĕркелеме, çĕнетме, проектсене пурнăçа кĕртме пулăшакансемпе Шупашкартан килнĕ Татьяна Кузьмина тата Елена Ильина менеджерсемпе тĕл пулнă. Вĕсем тӳррĕн сутуилӳ, банк продукчĕсем тата услугисем тĕлĕшпе чи усăллă сĕнӳсем суйласа илме пулăшас, сберăн пысăкрах бонусĕсене илес, телефонри мобильлĕ приложенисене хӳтĕлемелли тӳлевсĕр хăрушсăрлăх сервисĕсемпе тивĕçтерес тата ытти ыйтусем çинчен каласа панă тата пулăшнă.

**Наталия ФЕДОРОВА**

# Саккунсăр упранăшăн



**Хĕç-пăшалăн саккунсăр çаврăнăшне пӳлес ĕçри витĕмлĕ мелсенчен пĕри – уйрăм çынсем килте саккунсăр майпа упракан хĕç-пăшала, çурăлакан тата сирпĕнекен хатĕрсене право хурал органĕсенче укçаллă йышăнассине ĕçе кĕртни.**

Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн, хĕç-пăшала хăйсен ирĕкĕпе паракансене уголовлă явапăхран хăтараççĕ. Енчен те çуртра вăрттăн упранакан хĕç-пăшал, çар хатĕрĕсем пулсан çийĕнчех полици пайне килсе памалла. Çакăншăн укçатенкĕпе хавхалантараççĕ.

Хĕç-пăшала тата боеприпассене упрас йĕркесене те çирĕп пăхăнар. Ку енĕпе йĕркене пăссан саккунпа килĕшӳллĕн явап тытма тивет. Айăпçăна РФ Уголовлă кодексăн 222 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн 5 çул таран, е тата хĕç-пăшала саккунсăр сутсан пăшал хуçине 5–8 çул ирĕк прависĕр хăварма пултараççĕ.

Енчен те ыйтусем пулсан «Урмарский» полици уйрăмне çак телефонсемпе шăнкăравлама пулать:
8(83544) 2-19-08,
2-15-05.

Е çак электронлă почтăпа çыхăнма пулать: nyaginsa@rosgvardi.ru

# Виçерен иртекен ĕçшĕн

**Экстремизм майлă ĕçсем нихăçан та ырри патне илсе çитермеççĕ, пурнăça йывăрлатаççĕ кăна. Апла пулин те виçерен иртекен ĕçсем тума пăхакан çынсем çав-çавах тупăнаççĕ.**

Акă пуç тавра шухăшлама пултаракан вăй питти çын тĕлĕшпе интернетра экстремистла ĕçсем тума чĕннĕшĕн уголовлă ĕç пуçарнине вуласа пĕлтĕм пĕр хаçатра. Вăл унта Раççейĕн çар служащийĕсем тĕлĕшпе вăйпа усă курма ыйтнă. Паллах, кунашкал тĕслĕхсем айăплавсăр юлмаççĕ, юлма та пултараймаççĕ. Ырă ĕç тума чĕнмен вĕт-ха, киревсĕр çул çине тăма йыхравланă. Кун пеккине сивлемесĕр тăма май та çук. Суд та тĕрĕс мар арçынна çулталăк çурă ирĕксĕрлесе ĕçлеттермелли айăплав кăларнă тата вăл çулталăклăха социаллă сетьсенчи ушкăнсенче администратор тивĕçĕсене пурнăçлаймĕ. Урăхла каласан, мĕн шыранă, çавна тупнă.

**Иван ИВАНОВ**

# Гуманитарии в Чувашском госуниверситете: *люди, создающие смыслы*

**Существует миф, что гуманитарное образование меньше пользуется спросом, чем техническое. На самом деле, это утверждение ошибочно. Потому что гуманитарные дисциплины участвуют в формировании картины мира, критического мышления и лидерских навыков.**



К гуманитарным относят несколько направлений.

**Филологи/журналисты**

В Чувашском госуниверситете их готовит факультет русской и чувашской филологии и журналистики. Здесь три основных направления: «Журналистика», «Филология», «Педагогическое образование (с двумя профилями подготовки)». В этом году факультету выделено 58 бюджетных мест. На факультете есть уникальная аудитория - этноцентр «Наследие», где в игровой форме знакомят с историей чувашского народа, языком, традициями и интересными местами. За год в нем на экскурсии бывают более 5 000 человек.

Выбираете **педагогическое образование** с двумя профилями подготовки – по окончании можно работать преподавателем и русского и английского языков. Журналисты и филологи работают в СМИ, органах власти, учреждениях образования, науки и культуры, в сфере интернет-технологий и в рекламе. Большая часть ведущих на местных радио и телеканалах – выпускники факультета, ряд из них трудятся и в федеральных СМИ.

**Историки/географы**

На Историко-географическом факультете ЧувГУ историки занимаются исследованием документов, предметов, мест, имеющих отношение к прошлому, чтобы лучше понимать настоящее. Благодаря научным исследованиям уроженца Чувашии, историка, профессора Василия Димитриевича Димитриева, датой основания города Чебоксары считается 1469 год.

Студенты профилей **«Физическая география и ландшафтоведение», «Экономическая и социальная география», «Общая география»** в будущем могут быть географами, синоптиками, метеорологами, геофизиками, гидрологами, инженерами по охране окружающей среды, ландшафтными архитекторами. Профиль «Природопользование» готовит океанологов, геофизиков, экспертов-экологов. Профиль «Технология и организация внутреннего туризма и турагентской деятельности» – это кадры для индустрии гостеприимства и туризма. А всего абитуриентов ждут 152 бюджетных места в бакалавриате. На факультете 3 музея и несколько тематических студенческих сообществ.

**Юристы**

Мода на юридическое образование не закончится, поскольку возникают новые нормы права. На юридическом факультете ЧувГУ готовят специалистов по гражданскому, уголовному и государственному праву. Работать можно в любой области – от госструктур и адвокатуры до бизнеса.

Необычные аудитории факультета радуют студентов. Зал судебных заседаний – копия настоящего, есть криминалистическая лаборатория, и виртуальный зал суда, для закрепления теории и получения практических навыков, студенты занимаются в Юридической клинике и в Школе молодого адвоката. На факультете учат работать с цифровыми данными и онлайн сервисами.

В 2024 году факультет приготовил 22 бюджетных места для поступающих на первый курс. А еще на факультете ждут ребят, которые решили получать среднее профессиональное образование в области юриспруденции – 150 мест.

**Переводчики/лингвисты**

Факультет иностранных языков молодой, но очень современный. Учат и классическим романским языкам, и китайскому. Можно работать переводчиком, преподавателем, лингвистом, репетитором.

Всего в ЧувГУ 15 факультетов + Высшая инженерная школа (про технические направления читайте в материале за июнь), есть из чего выбрать. А еще в 2024 году стартовал набор в Военный учебный центр университета: юноши, проходящие обучение в бакалавриате и специалитете, смогут получить здесь военную специальность «сержант запаса» или «солдат запаса».

Современные общежития для иногородних студентов, санаторий-профилакторий и университетская клиника, спортивные площадки и собственный бассейн, Дворец культуры – в вузе хорошая образовательная и внеучебная атмосфера для студентов, стипендии до 20 000 рублей. А информация обо всех направлениях подготовки – на сайте abiturient.chuvsu.ru. Выбирайте профессию мечты и приезжайте учиться в Чувашский госуниверситет! Будет интересно. До встречи!

*«Çĕр çырлинчен хăйне евĕрлĕрех варени пĕçерес килет. Ăна хамăр пахчарах тĕрлĕ сортлине лартса ÿстерме пуçларăмăр та. Аванах тухăç парать халĕ».*

**З.ИВАНОВА,Тăвай ялĕ**

# Çĕр çырли варенийĕ

## Пĕтнĕкпе



**1,5 кг çĕр çырли, 1 кг сахăр песукĕ, 500 г апельсин, пĕтнĕк турачĕ кирлĕ.**

Çĕр çырлине çумалла, шултăра çырласене 2-3 пая пайламалла, Кастрюле е таза çĕр çырлипе сахăр песукне сийлесе сармалла. Сарлака савăт илсен аванрах, сĕткенĕ чаcрах вĕресе типет. Алюмини савăтра пĕçерме юрамасть.

Апельсина хуппинчен тасатса турамалла.

Çырла савăтне çулăм çине лартмалла. Вĕреме кĕрсен çулăма чакармалла, кăпăкне пуçтармалла.

Туранă апельсин, пĕтнĕк туратти хушса 20-30 минут вĕретмелле,. пăтратса тăмалла, çиелти кăпăка пуçтарса илмелле.

Пĕтнĕк тураттине кăларса илмелле. Вăл тек кирлĕ пулмасть. Варение стерилизациленĕ банкăсене тултарса хупмалла.

## Лимонпа



**1 кг çĕр çырли, 700 г сахăр песукĕ, 1 лимон кирлĕ.**

Çĕр çырлине çумалла.

Çĕр çырлине сахăр песукĕпе пăтратса 8 сехет лартмалла.

Çулăм çине лартса вĕреме кĕртмелле. Кăпăкне вăхăтра пуçтарса тăмалла.

Лимон хуппине вĕтĕ теркăпа хырмалла, сĕткенне кăлармалла. Вĕсене вĕреме кĕнĕ çырла çине ямалла.

10 минут пĕçернĕ хыççăн стерилизациленĕ банкăсене ярса хупмалла.

## Пĕçермесĕр

**500 г çĕр çырли, 2 киви, 600 г сахăр песукĕ кирлĕ.**

Çĕр çырлине çумалла. Кивине хуппинчен тасатса турамалла.

Блендерпа е ал арманĕпе нимĕрлемелле. Сахăр песукĕ ярса ирĕличчен пăтратмалла.

Стерилизациленĕ банкăсене тултарса хупмалла. Сивĕ çĕрте упрамалла.

# Хăяр валли «утиял»

**Вĕлтĕрен çулçине, тунине вĕтех мар вакламалла (тыткалама çăмăлрах). Хăяр тĕмĕ тавра мульча пек сарса тухмалла.**

Хĕвел, нÿрĕк, çил, микроорганизмсен витĕмĕпе çĕрнĕ май вĕлтĕренрен хăяра усăллă япаласем куçаççĕ. Çав вăхăтрах вăл тăпра тата хăяр тымарĕ типесрен, сăтăрçăсенчен сыхлать, тăпрана минералсемпе пуянлатать.



СЫВЛĂХ

# Камăн мĕн ыратать?

**Ăш хытнинчен.** Çывăрас умĕн 1 апат кашăкĕ тип çу ĕçмелле.

**Пÿçĕре (грыжа) сиплеме.** Тин вĕретнĕ 0,5 л шыва 1 апат кашăкĕ йĕплĕ хурлăхан çулçи ямалла, 2 сехет лартмалла. Кунне 3–4 хутчен апат умĕн çуршар стакан ĕçмелле.

**Ÿслĕкрен.** 1 стакан сĕтре 2 пуç сухан пĕçермелле, çулăм çинчен илсен 4 сехет тытмалла, сăрăхтармалла, кашни çур сехетрен пĕрер кашăк ĕçмелле.

**Папиллома (ĕмкĕч евĕрлĕ сиенсĕр мăкăль).** Хул айне е урăх çĕре тухнă ÿт таткине каçхине пуçлă сухан сĕткенĕпе сĕрмелле. Сухан фитончичĕ ăна майĕпен типĕтет. Пĕр уйăх таранах сипленме тивет. Çакăн пеке пек кун пек чухне шĕпĕн курăкĕ найстойки те пулăшать. Унпа ăна кунне 2–3 хутчен сĕрмелле.

**Чĕркуççи ыратнинчен.** Тройной одеколон, йод, 10 таблетка анальгин кирлĕ. Пурне те хутăштармалла (таблеткăна вĕтетмелле). Савăта алоэ çулçин (6 çулçă) сĕткенне хушмалла. Лайăх пăтратса 10 кун тĕттĕм вырăнта тытмалла. Хатĕр эмеле чĕркуççине çеç мар, пилĕке те сĕрме юрать.

**Ыйхă вĕçнĕрен.** Çывăрас умĕн лимон сĕткенĕпе пыла хутăштарса ĕçмелле. Пылпа турăх ĕçни те усăллă. Çавна май нерв тытăмĕ лăпланать, ыйхă та килет.

**Аллергирен.** Ыхра пулăшнипе унран çăмăллăнах хăтăлма пулать. Пахча çимĕçе теркăпа хырмалла та пăтă хатĕрлемелле. Ăна кунне виçĕ хутчен вĕретнĕ шывпа çăтса ямалла. Кашни тăватă кун хыççăн виçĕ кун канмалла. Вăл астмăран та пулăшать.

ПĔЛМЕ

# Пуç ыратнине иртерме

**Уяв хыççăн хăш чухне пуç чăтма çук ыратать, кăмăл пăтранать. Сăлтавĕ паллă: эсир виçерен иртсе эрех-сăра ĕçнĕ. Çак «нушаран» мĕнле хăтăлмалла-ха? Ку инкек, ан тив, сире аптăратмасть тейĕпĕр. Анчах çывăх çыннăр та мухмăр тыткăнĕнче çакланма пултарать.**

Чи малтанхи тата чи ансат пулăшу вăл – организма эрех юлашкисенчен... хăсса тасатни. Алкоголь юна пырса тăма пăрахать, организм текех наркăмăшланмасть. Çакăн хыççăн валериана ĕçме юрать. Анчах валидол тата нитроглицерин ĕçме хушмаççĕ. Вĕсем вена тымарĕсене сараççĕ.

- Ĕçкĕ-çикĕ хыççăн хăвăра кансĕр туятăр пулсан 1 стакан сивĕ шыва 5 тумлам нашатырь спирчĕ ярса ĕçмелле.
- Чĕрĕ çăмартана лăкаса пăтратмалла, унта уксус, тăвар, кетчуп хушмалла та ĕçсе ямалла.
- Пĕр черкке шур эрехе темиçе кашăк хăймапа хутăштармалла тата 1 кашăк пыл, пăр катăкĕ ямалла, вăраххăн ĕçмелле.
- 1 стакан сивĕ шыва 20 тумлам пĕтнĕк спиртне ярса тÿрех ĕçсе ямалла, 1–2 минутран йăлтах иртсе каять.
- 2 чей кашăкĕ касторка çуне пĕр стакан сĕтпе хутăштарса ăшăтмалла (вайсăр çулăм çинче), тепĕр чей кашăкĕ пăрăç хушмалла, сивĕниччен пĕчĕккĕн ĕçмелле.
- Сĕлĕпе календула шывне ĕçни пирус туртас килнине пăрахма та пулăшать. Кастрюле (3 литр) хуппинчен тасатман сĕлĕ çурри таран хумалла, унта мĕн туличчен сивĕ шыв ямалла, 30 минут вĕретмелле. Унтан сĕлĕ шывне сăрăхтармалла та 100 грамм календула чечекĕ хушса 10–12 сехет тытмалла. Хатĕр шыва апат умĕн виçĕ хут пĕрер стакан ĕçмелле.
- Хăнана каяс умĕн (ÿсĕрĕлес мар тесен) симĕс е хура чее пĕтнĕк курăкĕ хушса вĕретмелле те пĕрер стакан ĕçмелле, киле килсен те тепĕр хут ĕçмелле, ÿсĕрĕлни иртсе каять.
- Ĕçкĕ-çикĕ умĕн тата ун хыççăн лимон сĕткенĕпе е лимон касăкĕпе хура кофе ĕçсен пуç ыратни, ÿсĕр туйăм хăвăрт иртет.
- Çурăм çинче выртакан ÿсĕр çыннăн пуçне кăшт çĕклесе алăсемпе хăлхисене хăвăрттăн хытă сăтăрмалла, ун хыççăн вăл часах тăна кĕрет, пуç кашлани иртсе каять.

*(Халăх медицинин меслечĕсемпе сипленме пуçличчен тухтăрпа канашлама ан манăр).*

# Чăвашлăх уявĕсенче

**Июлĕн 5-мĕшĕнче «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕ (ертӳҫи – Чăваш Республикин тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ Елена Матросова, купăспа хавхалантарса пыраканĕ – Николай Петров) Ҫĕрпӳ хулинчи Тихвин ярмăркkинче пулчĕ, Пĕтĕм регионсен хушшинче иртекен Наци культурисен уявĕнче хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕ. Ушкăна парне тата лауреат Дипломне парса хавхалантарчĕҫ.**

Иртнĕ вырсарникун вара Тутарстанти Хусанкай ҫуралнă Сиктĕрме ялĕнче Ҫемье ҫулталăкне халалланă Пĕтĕм чăваш культурин уявĕнче пултăмăр. Унта «Тăвай ен» халăх ушкăнĕпе пĕрле хамăр енчи чăваш юрри-ташшисемпе савăнтартăмăр. Удмурт, Мари Эл, Самар, Чулхула тăрăхĕсенчен, ытти регионсенчен те, Азербайджанран та килнĕ хăнасем Сиктĕрме уявне. Пурте чăваш тумĕсемпе. Ҫапах та пирĕнни пек хитре те ятуллă хушпу, тухья пулмарĕ тесен те юрать пулĕ. «Сирĕн тумĕ те, хушпутухйи те питĕ хитре»,–тесе мухтарĕҫ тăвайсене. Эпир ку уява виҫҫĕмĕш ҫул хутшăнатпăр ĕнтĕ, ҫултан ҫул лайăхланса, хитреленсе пырать Сиктĕрме ялĕ. Улшăнусем куҫ умĕнчех. Крепоҫа тума кăна пуҫланăччĕ виҫĕмҫул, пĕлтĕр пĕр енчи стенине ухтарнăччĕ, кăҫал вара туса пĕтернĕпе пĕрех.

Сиктĕрмери СССР паркĕнче уяв тĕлне «Сухапуҫран пуҫласа космос ракети таран» музей уҫăлнă. Сăмах май, утă уйăхĕн 4–7-мĕшĕсенче асăннă тăрăхра чăваш ҫамрăкĕсен «Аталан» фестивалĕ те иртнĕ. Вăл – вĕренӳ проекчĕ.

Тепĕр ырă самант вăл – купельте шыва кĕрсе тасални. Ҫакăн пек уявсенче пулни таврakурăма пуянлатать, ăстăна анлăлатать, пĕр-пĕринчен вĕренме пулăшать. Ҫак пĕчĕк ялта чăвашлăха ҫĕклесине, сумланине курса хавхалантăмăр. Уявра ҫемье чăваш халăхĕшĕн тĕрев пулни те палăрчĕ.

«Чун савăнать, чĕре сикет, татах та хастар пулас килет»,–тесе ахальтен юрламастпăр ĕнтĕ. Тавтапуҫ культура ĕҫĕнче тăрăшакансене пире пулăшса пынăшăн, уйрăмах пирĕн ертӳҫĕсене Арина Юрьевна Алексеевапа Надежда Анатольевна Ивановна. Малалла та ытти регионсене те тухса ҫӳреме май пултăр, хамăр пултарулăхпа паллаштарар, вĕсенчен те вĕренер. Ахальтен каламан ĕнтĕ ваттисем: «Ҫӳрен каска якалать, выртан каска мăкалать»,–тесе.

**Елена МАТРОСОВА,**
**«Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕн ертӳҫи**




## КИРЛĔ ПУЛĔ

### Харлаттаратăр-и?

**Ҫывăрнă чухне харлаттаратăр-и?**

Аптекăра сысна курăкĕн (алтей) тымарне туянма васкăр. Каҫхине термоса 1 апат кашăкĕ вĕтетсе типĕтнĕ тымар, 1 стакан вĕри шыв ямалла. Ирхине ăна сăрăхтармалла, шыва кун каҫипе виҫĕ ăстрăмпа ĕҫмелле. Шĕвек ăшă пулсан аванрах. Каҫхине каллех сиплĕ чей хатĕрлемелле.

Туяннă курăк пĕтиччченех сипленмелле ҫапла.

Енчен те ӳсĕрттерчĕ, ҫавна май ҫăра сурчăк тухрĕ пулсан хăрама кирлĕ мар – сывлăш ҫулĕсемпе ӳпке тымарĕсем ҫеç тасалса тухаҫҫĕ.


## П Ĕ Л Т Е Р Ӳ С Е М

0217 ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.
Т. 8-9876617161 35-9

0121 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ.
Т. 8-9279985488. Володя. 11-11

0305 ПЕСОК.ЩЕБЕНЬ.ОПГС.
Т. 8-9061333944 22-7

0889 В КФХ Новикова Е.Г.
требуются рабочие.
Т. 8-9871295879

0146. ПЕСОК. ГРАВМАССА.
ЩЕБЕНЬ. НАВОЗ. Доставка.
Т. 8-9523106871 11-10

0815 БУРЕНИЕ КОЛОДЦЕВ,
ж/б колец. Доставка.
Т. 8-9603061972 4-1

1341 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ.
Т. 8-9278445544,
8-9530140140 10-7

1963 Требуются разнорабочие
в Москву. З/п от 90 тыс. р.
Т. 8-9373882555 26-23

0867 ПРОДАЮТСЯ
бычки и телочки.
Возраст от 1-го до 3-х месяцев.
Доставка. Т. 8-9278108132

1924 КУПЛЮ бычков,
коров, телок,
вынужд. забой. Дорого.
Т. 8-9370160057 27-23

0694 КУП. коз, овец, бычков.
Т. 8-9278508564 25-1

0415 ОКНА ПВХ под ключ
от производителя за кор. сроки.
Замер. Гарантия. Скидки.
Монтаж по ГОСТу
Т. 8-9603031551 11-6

0865 ТРЕБУЮТСЯ
отделочники,
подсобные рабочие!
З/п 80 - 120 т.р.
Т. 8-9867071193 2-1

1826 ДРОВА (колотые, метровые).
Доски: хвоя, береза, осина. Сруб.
Т. 8-9373944344,
8-9278423391 33-26

0890 « ЭЛЕКТРОПАСТУХИ»
На любую площадь.
Есть доставка. Выгодные цены.
Машинки для стрижки овец.
Т. 8-9613472140 3-1

0789 СХПК «Дружба»
требуются на работу
комбайнеры,
трактористы.
Оплата высокая,
своевременная.
Возможна доставка до работы
и обратно в пределах района.
Т. 8-9003348717 2-2

Мы есть в сообществе «ВКонтакте»,
также в телеграмм канале.
Хотите узнать подробнее,
проходите по QR-коду


## Памятные даты военной истории

**17 июля** – День рождения морской авиации ВМФ России (108 лет)

Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕ Нижневартовскран ятарлă ҫар операцине мобилизациленнĕ

**Евгений Сердарович**
**ДЖУМАНЗАРОВ**

паттăрла пуҫ хунă пирки ҫемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни ҫинчен пĕлтерет.

Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕ Тушкил ялĕнче ҫуралса ӳснĕ

**Владимир Николаевич**
**АЛЕКСЕЕВ**

ятарлă ҫар операцийĕнче паттăрла пуҫ хунă пирки унăн ҫывăх ҫыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни ҫинчен пĕлтерет.

«Тăвайри кооператив»» потребобщество ĕҫ ветеранĕ, нумай ҫул ҫăкăр пĕҫерекенре ĕҫленĕ

**Анастасия Григорьевна**
**ЕГОРОВА**

вилсе кайнă пирки унăн ҫемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни ҫинчен пĕлтерет.

«Тăвайри кооператив» потребобщество Людмила Филипповна Михайлова бухгалтерăн ашшĕ

**Филипп Григорьевич**
**ШАЛЫГИН**

вилсе кайнă пирки унăн ҫемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни ҫинчен пĕлтерет.


Министерство обороны Российской Федерации

## ВОЕННАЯ СЛУЖБА ПО КОНТРАКТУ

КОНТРАКТ21.РФ

**ТРЕБОВАНИЯ К КАНДИДАТАМ**
- возраст от 18 до 60 лет
- годен по состоянию здоровья

**КОНТРАКТ ЗАКЛЮЧАЕТСЯ**
на 1 год, 2 года, 3 года
5 лет и 10 лет

**4 ШАГА ДЛЯ ПОСТУПЛЕНИЯ**
1. **Пройти собеседование** с психологом в пункте отбора
2. **Сдать документы** в пункт отбора
3. **Пройти медицинский осмотр** в военном комиссариате
4. **Получить предписание** и убыть к месту службы

**ОБРАТИТЬСЯ С ЗАЯВЛЕНИЕМ (ПОДАТЬ ЗАЯВКУ) ВАРИАНТЫ:**
- **лично, почтовым отправлением, по телефону** в военный комиссариат или пункт отбора
- **в личном кабинете** гражданина на сайте Минобороны России **службапоконтракту.рф**
- **через электронный сервис** «Стать добровольцем или контрактником» на едином портале государственных услуг **госуслуги.рф**

**ПЕРЕЧЕНЬ ДОКУМЕНТОВ**
1. **Автобиграфия** и анкета (форма на сайте) **службапоконтракту.рф**
2. **Паспорт**
3. **Военный билет** (при наличии)
4. **Свидетельство о браке и рождении детей** (при наличии)
5. **ИНН, СНИЛС**
6. **Банковские реквизиты**

**ЕДИНОВРЕМЕННОЕ ДЕНЕЖНОЕ ДОВОЛЬСТВИЕ**

***195 000 РУБЛЕЙ***
(при заключении контракта на срок от года и более)

***305 000 РУБЛЕЙ***
(региональная денежная выплата)

**ВЫПЛАТЫ В ЗОНЕ СПЕЦИАЛЬНОЙ ВОЕННОЙ ОПЕРАЦИИ**

***ОТ 210 000 РУБЛЕЙ В МЕСЯЦ***
(в зависимости от воинского звания, должности и выслуги лет)
- заместитель командира взвода – командир отделения – от 232 000 рулей
- командир отделения – от 222 000 рублей
- инструктор штаба – от 222 000 рублей
- начальник радиостанции командно-штабной машины – от 218 000 рублей
- старший механик-радиотелефонист – от 216 000 рублей
- старший телефонист – от 210 000 рублей
- гранатометчик – от 210 000 рублей
- водитель – от 210 000 рублей
- повар – от 210 000 рублей
- стрелок – от 210 000 рублей
- старший водитель-электрик – от 210 000 рублей
- пулеметчик – от 210 000 рублей

**СОЦИАЛЬНЫЕ ЛЬГОТЫ И ГАРАНТИИ**
- **возможность быстрого приобретения** жилья за счет Минобороны России через накопительно-ипотечную систему
- **служебное жилье** или компенсация за найм жилья
- **бесплатное обследование, лечение** и реабилитация в военно-медицинских учреждениях
- **страхование жизни** и здоровья за счет федерального бюджета
- **право на льготную пенсию** после 20 лет службы
- **статус ветерана** боевых действий и соответствующие льготы
- кредитные и **налоговые каникулы**
- **бюджетные места** для обучения детей в вузах
- **за будущими контрактниками бронируются рабочие места**
- **бесплатный отдых детей** в летних оздоровительных лагерях
- **льготы и гарантии** субъектов Российской Федерации для военнослужащих по контракту

**ВОЕННЫЙ КОМИССАРИАТ ГОРОДА КАНАШ, КАНАШСКОГО И ЯНТИКОВСКОГО РАЙОНОВ**
**8(83533) 4-18-34 4-18-21 4-12-75**

**Степанов Михаил Евгеньевич 8(987) 578-95-31**



**"Ял ĕҫченĕ"**
(“Сельский труженик”)

Тĕп редактор
А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви;
Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕҫченĕ» хаҫат редакцийĕ» ХТУ

Хаҫата ҫыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 ҫулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаҫат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.

Пичете панă 11.07.2024 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал ҫырăвĕсене рецензилемеҫҫĕ тата каялла тавăрса памаҫҫĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй И.И.ГЛАДКОВ

Компьютерпа калăплакан: Н.В.АЛЕКСАНДРОВА

Хаҫата районти “Ял ĕҫченĕ” хаҫат редакцийĕнче наборласа версткăланă, “Чăваш Ен” ИПК” АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш ҫурт.
Ҫырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1350. Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш ҫурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăҫĕн тата ҫырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru